Олимпиадные задания по чувашскому языку и литературе
для муниципального тура республиканской олимпиады
школьников общеобразовательных организаций
с обучением на чувашском языке
2017-2018 учебный год. 10 класс

Максимальный балл – 50
Время выполнения – 120 минут

1. Çак йĕркесен авторĕ кам? Ятне, ашшĕ ятне, хушаматне (псевдонимĕ пулсан – псевдонимне те) туллин çырăр.

(1)*Тăван чĕлхе вăл халăхăн сăваплă та чи таса, чи хаклă пурлăхĕ. …* (2)*Тăван чĕлхе – тĕнче ăс-хакăлĕ.* (3)*Калама çук пуян, ытарайми хитре вăл пирĕн тăван чĕлхемĕр.* (4) *Чăваш чĕлхипе кирек мĕнле туйăма та, тем тĕрлĕ пысăк шухăша та сар кайăк юрри пек, шăнкăр-шăнкăр шыв юххи пек, хурăн çулçисем шĕпĕлтетни пек илемлĕн те сăнарлăн, хав-халануллăн, çĕкленӳллĕн, кирлех пулсан ытарлăн та каласа кăтартма пулать.*

2. Текстра кайăк ячĕ тупăр, вырăсла куçарăр.

3. Текстран евĕрлев сăмахне (сăмахĕсене) тата евĕрлев сăмахĕнчен пулăннă сăмаха (сăмахсене) çырса илĕр.

4. Анаграмма тупсăмне пĕлĕр.

Ята тĕрĕс каласан –
Пучахра пулатăп эп.
Сасăсем ылмашăнсан –
Вăрманта куллен çÿреп.

5. 4-мĕш предложени хутлă е хутсăр пулнине кăтартăр, хăвăр шухăшăра ĕнетерсе парăр.

6. Чăвашла хаçат кăларас ĕçе чи малтан кам пуçаннă? Хаçат ячĕ мĕнле пулнă?

7. Мĕн вăл лирика зачинĕ?

8. Петĕр Хусанкайăн «Хура пĕркенчĕк» ярăмĕнче пурĕ миçе хайлав? Вĕсене поэт хăш хулара хайланă?

9. Çак йĕркесен авторĕ кам?

«Çав шĕл кăвар – чăваш сăмахĕ,
Чечен чĕлхе – чăваш чĕлхи.
Вăл упрансассăн – хам хамах эп,
Упранмасан – эп çын мĕлки».

10. Çеçпĕл Мишшин «Юншăх» калавĕнчи тĕп герой кам? Унăн прототипне палăртăр.